## Иисус Христос Çурални

1 Çав вăхăтра Рим патши Август пĕтĕм патшалăхри халăха çырса
тухма хушнă. 2 Çак пирвайхи хут халăха шута илесси Сири ççрне
Квириний тытса тăнă чухне пулнă. 3 Вара пурте кашни хăйĕн
хулине çыранмă тухса кайнă. 4 Иосифăн, Давид йăхĕнчен пулнăран,
Галилейăри Назарет хулинчен Иудейăри Вифлееме, тахçан Давид
çуралнă хулана каймалла пулнă. 5 Çапла Иосиф хăйĕн çураснă
хĕрĕпе Марийăпа пĕрле ят çыртарма кайнă. Мария ун чухне йывăр
çын пулнă. 6 Вифлеемре унăн çăмăлланас вăхăчĕ çитнĕ. 7 Вара
Мария хăйĕн малтанхи Ывăлне çуратнă. Хăна çуртĕнче вырăн
пулманран вăл Ăна чĕркесе сурăхсене апат памалли сырăша
вырттарнă. 8 Çавăнтан аякра мар, хирте, кĕтӳçĕсем çĕрле сурăх
кĕтĕвĕсене хуралланă. 9 Сасартăк вĕсен умне Турă ангелĕ пырса
тăнă та, вĕсене Туррăн мухтавлăхĕ çутатса янă. Кĕтӳçĕсем çав тери
хăраса ӳкнĕ. 10 Ангел вĕсене çапла каланă: «Ан хăрăр! Эпĕ сире
пĕтĕм халăха савăнтармалли ырă хыпар пĕлтерме килтĕм. 11 Паян
Давид хулинче сире Çăлакан çуралчĕ, Вăл — Христос Турă! 12 Акă
сире паллă: эсир сырăша чĕркесе вырттарнă Ачана курăр». 13 Унтан
сасартăк çав ангелпа пĕрле пĕлĕтри ангелсен йышлă çарĕ курăнса
кайнă. Вĕсем Турра мухтаса юрланă: 14 «Мухтав çӳлти Турра, çĕр
çине канăçлăх килчĕ, çынсене ырăлăх çитрĕ!» 15 Ангелсем пĕлĕте
çĕкленсе кайсан кĕтӳçĕсем пĕр-пĕрне каланă: «Атьăр, Вифлееме
кайса унта мĕн пулнине, Турă пире мĕн каласа пĕлтернине курар».
16 Вĕсем васкаса Вифлееме çитнĕ те Марийăпа Иосифа тата
сырăшра выртакан пĕчĕк Ачана шыраса тупнă. 17 Ачана курнă
хыççăн кĕтӳçĕсем хăйсене ангел Çак Ача пирки мĕн пĕлтернине
каласа панă. 18 Итлекенсем пурте кĕтӳçĕсем каласа кăтартнинчен

тĕлĕннĕ. 19 Çак сăмахсене Мария ялан хăйĕн чĕринче усранă. 20
Йăлтах ангел каланă пек пулса иртнĕ. Çавна курма-илтме тӳр
килнишĕн Турра мухтаса кĕтӳçĕсем хăйсен кĕтĕвĕ патне таврăннă.